# **Ача**-пăча библийĕ

**Тăратаканĕ**



# **Ной тата**
# пĕтĕм çĕре
# **шыв илни**

Çыравçи: **Edward Hughes**

**Иллюстрацилекенĕ**: **Byron Unger; Lazarus Alastair Paterson**

**Адаптацилекенĕ**: **M. Maillot; Tammy S.**

Куçаруç**и: www.christian-translation.com**

**Калăплакан компанийĕ**: Bible for Children
**www.M1914.org**

**©2021 Bible for Children, Inc.**
Лицензи: сутса яриччен сирĕн çак халапа копилесе **илме** е пичетлеме ирĕк пур.



Ной Турра пуççапакан çын пулнă. **Ыттисем пурте Турра курайман тата** ăна итлемен. Пĕррехинче Турă аптраттарса ӳкерекен сăмахсем каланă. “Эпĕ çак йĕркесĕр тĕнчене пĕтерĕп, - тенĕ Турă **Ноя.** - Санăн çемйӳ çеç çăлăнса юлĕ”.

Турă Ноя пĕтĕм çĕре шыв илесси пирки асăрхаттарнă. “Хăвăн çемйӳ валли тата нумай чĕр чуна вырнаçтарма çителĕклĕ йывăç **ковчег, пыс**ăк кимĕ**, ту**”, **- тесе** хушнă **Ноя.** Турă Ноя тĕрĕс **хушусем** панă. **Ной** ĕçе тытăннă!



Ной мĕншĕн ковчег тунине ăнлантарса панă чухне çынсем **унран** кулнă ç**е**ç.



**Ной** чарăнман. Вăл çынсене Турă çинчен те каласа панă. **Анчах** ăна **никам та итлемен.**


Нойăн çирĕп ĕненӳ пулнă. Çумăр унччен нихăçан та пулман пулин те, вăл Турра ĕненнĕ. Кĕçех ковчег хатĕр пулнă.

Унтан чĕр чунсем те çитнĕ. Турă çичĕ тĕрлĕ чĕр чӳн, унтан тата икĕ тĕрли илсе килнĕ. Кайăк-кĕшĕкĕ, тискер кайăкĕсем пысăкки те пĕчĕкки **пурте ковчег патнелле** туртăннă.



**Тен,** çынсем Ной чĕрчунсене тиенĕ чухне мăшкăлласа кулнă **та.** Вĕсем Турра хирĕç çылăх **тума** пăрахман. Вĕсем **ковчега** кĕме **ыйтман та.**





**Çапла карап** çине **пур** чĕрчунпа кайăк-**кĕшĕк та пырса** кĕнĕ. “Ковчега кĕр”**, -** тенĕ Ноя Турă. “- Эсĕ **те**, санăн çемйӳ **те**”**. Ной,** унăн арăмĕ, унăн виçĕ ывăлĕ тата вĕсен арăмĕсем ковчега кĕнĕ. Вара Турă алăка хупнă!



Унтан çумăр çума пуçланă. Вăйлă çумăр çĕре хĕрĕх **кун та хĕрĕх** каç пĕр **чарăнмасăр йепетнĕ**.



**Шыв хуласемпе ялсене** тултарнă. Çумăр чарăнсан **тусем те шыв айне путн**ă. Сывлăшпа **сывлакансем** пурте вилнĕ.



Шыв хăпарсан, **ковчег**
çӳлелле ишсе тухнă.
**Тен,** шалта тĕттĕм пулнă**,**
**тен,** тирпейсĕр те**, тен,**
хăрушă та пулнă пулĕ.
**Анчах та ковчег Ноя шыв**
илесрен хӳтĕленĕ.

Пилĕк уйăхран Турă типĕтекен çил янă. **Ковчег** майĕпен Арарат ç**улл**ĕ тăвĕ çинче чарăнса тăнă. **Ной шыв** чакичченех шалта тата хĕрĕх кун **к**ĕ**тн**ĕ.



Ной ковчегăн уçă чӳречинчен ула куракпа кăвакарчăна янă. **Канма** типĕ вырăн тупайманнипе кăвакарчăн Ной патне таврăннă.



Тепĕр эрнерен Ной тепĕр хут хăтланса пăхнă. Кăвакарчăн хăйĕн сăмсинче ешĕл олива çулçи илсе килчĕ. Тепĕр **эрнере Ной** çĕр типсе ларнине пĕлнĕ, мĕншĕн **тесен** кăвакарчăн таврăнман.

Турă Ноя ковчегран тухма вăхăт çитнĕ тесе каланă**.** **Нойпа** унăн çемйи чĕрчунсене кă**ларн**ă.



**Ной ҫав тери сăваплă** пулнă! **ăна та,** унăн ҫемйине те шыв илнинчен ҫăлса хăварнăшăн вăл **Турра тав туса** алтарь тунă та пуҫҫапнă.





Турă Ноя **çирĕп** сăмах панă. **Этеме** çылăхĕсемшĕ**н суд** тумашкăн Вăл урăх нихăçан та пĕтĕм çĕре **шыв** ямĕ.

Турă хăйĕ**н** **сăмахне яланах асра тытн**ă. **Асамат** кĕперĕ турă сăмах **панине** пĕлтернĕ.



Нойпа унăн çемйи
çĕре шыв илнĕ
хыççăн çĕнĕ пурнăç **тума**
**тыт**ă**нн**ă. Вăхăт иртнĕçемĕн
унăн тăхăмĕ çĕнĕрен
пĕтĕм çĕре вырăнаçса
**тултарн**ă. Тĕнчери
**пур** халăх
**та**

**Нойпа** унăн
**ачисенчен** çуралнă**.**

Ной тата пётём çёре шыв **илни**

Турă Сăмахёнчи, Библири, халап

**ра вырнаçнă**

**Пултарни 6-10**

“Сирён Сăмахăрсен алăкё çутă парать.”
**Псалом 119:130**

Bĕçĕ

Библири çак истори пире хамăр тĕлĕнмелле Турă çинчен каласа парать, вăл пире пултарнă тата эсир ăна пĕлччĕр тет.

Эпир япăх ĕçсем тунине турă пĕлет. Çылăхшăн **наказани**-вилĕм, Анчах Турă сире питĕ хытă юрататать, çавăнпа Вăл Хăйĕн Пĕртен-пĕр Ывăлне Иисуса Хĕрес çинче вилме тата сирĕн çылăхăрсемшĕн наказани пама янă. **Унтан** Иисус пурнăç патне таврăннă та киле, Пĕлĕте, кайнă! **Эсир** Иисуса ĕненетĕр пулсан тата çылăхăрсене каçарма ыйтатăр пулсан, вăл çавна тăвĕ! Вăл килĕ те халĕ сирĕнте пурăнĕ, вара эсир унпа ĕмĕр-ĕмĕр пурăнатăр.

Эсир ку чăнлăх пулнине ĕненетĕр пулсан, çакна турра калăр: Хаклă Иисус, эпĕ эсĕ Турă пулнине ĕненетĕп, çылăхăмсемшĕн вилме этем пулса тăтăм, халĕ Вара эсĕ каллех чĕрĕ. Тархасшăн, ман пурнăçа кĕр те ман çылăхсене каçар: эпĕ халех çĕнĕ пурнăçпа пурăнма, пĕррехинче санпа яланлăхах пурăнма пултарăп. **Мана** сана пăхăнса тăма, саншăн ачу **пек** пурăнма пулăш. **Аминь.**

Библие вулăр та Турăпа кашни кун калаçăр! **Иоанн 3:16**